26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
АПРЕЛЬ
30
ЭРНЕКУН
91(6328) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Мускав, Кремль

Оборонан Государственный Комитечӗн Председательне СТАЛИН юлташа

Эпир, Чӑваш республикинчи ялхуҫалӑхӗнче тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре малта пыракансем, партипе совет активӗ, республикӑна обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ӑнӑҫусемшӗн Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне панӑ ятпа чаплӑ пухӑва пухӑннӑскерсем, Сире, юратнӑ аттемӗре, аслӑ ҫулпуҫа тата учителе, генилле полководеца, большевикла хӗрӳллӗ салам яратпӑр.

Совет ҫыннисен ӗҫри активлӑхне ҫӗклемелли хӑватлӑ май пулса тӑракан социализмлӑ ӑмӑрту пирӗн республикӑри промышленноҫра та, ялхуҫалӑхӗнче те анлӑн сарӑлса кайрӗ. Колхоз хирӗсемпе выльӑх-чӗрлӗх фермисенче хӗрӳллӗн ӗҫлени пире облаҫсемпе республикӑсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче мала тухса ӗҫ гвардийӗн ялавне илме май пачӗ. Эпир, Сталин юлташ, пирӗн хӗрӳллӗ ӗҫе Эсир ҫавӑн пек пысӑк хака хунипе чӗререн савӑнатпӑр тата мухтанатпӑр.

Отечественнӑй вӑрҫӑн хаяр кунӗсенче, юратнӑ Тӑван ҫӗршыв умне пысӑк хӑрушлӑх тухса тӑнӑ вӑхӑтра, Чӑваш республикинчи мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсем, выльӑх-чӗрлӗх фермисенчи работниксем, МТС-сен тракторисчӗсемпе комбайнерӗсем пӗр тӗллевпе, фронтпа ҫӗршыв валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем, промышленноҫть валли чӗртавар парас, тӑван Хӗрлӗ Ҫара вӑйлӑнрах пулӑшас, тӑшмана татӑклӑнах ҫӗнтерес сехете ҫывхартас тӗллевпе пурӑнса ӗҫлерӗҫ.

Иртнӗ ҫулта социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ малалла ӳссе тӗрекленсе пычӗ. Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем, тӑван ҫӗршыв кунҫулӗшӗн хӑйсем ответлӑ пулнине ӑнланса, нихӑҫанхинчен те лайӑхрах ӗҫлерӗҫ, кашниех икӗ ҫыншӑн, виҫӗ ҫыншӑн ӗҫлерӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырса, республикӑри колхозсем, МТС-семпе совхозсем иртнӗ ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ, тырпул акӑнакан ҫӗр лаптӑкне 47 пин гектар чухлӗ ӳстерчӗҫ, ялхуҫалӑхӗн тӗп культурисен тухӑҫлӑхне ӳстермелли государственнӑй плана пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Нумай колхозсем кашни гектартан ҫӗршер пӑт тырӑ туса илчӗҫ. Республикӑри колхозсем государствӑна тырпул, аш-какай тата пахча-ҫимӗҫсем памалли плансене пӗтӗмӗшпех тултарчӗҫ. Ҫӗршер колхозсем 1943 ҫулти обязательство шучӗпе ялхуҫалӑх продукчӗсем аванспа пачӗҫ.

1942 ҫулта выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстерес тӗлӗшпе государство панӑ плана Чӑваш республикӗ ирттерсе тултарчӗ. Майракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепӗ пирӗн колхозсенче 40 процент чухлӗ, сыснасен хисепӗ 29 процент, сурӑхсемпе качакасен хисепӗ 74 процент чухлӗ ӳсрӗ. Ҫӗршер стахановецсем, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫӗн мастерӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ, вӗсем ҫамрӑк выльӑхсене пӗтӗмӗшпех сыхласа хӑварчӗҫ тата выльӑх-чӗрлӗхӗн тухӑҫлӑхне ӳстерчӗҫ. Ҫӗрпӳ районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри доярка Таисия Драгункина юлташ кашни ӗнерен 3090-шар литр сӗт суса илнӗ. Сӗнтӗр районӗнчи «Ҫӗнӗ Юнга» колхозри свинарка Фекла Михайловна Вазикова юлташ кашни ама сыснаран 20-шер ҫӑвӑр илнӗ. Комсомольски районри Шмидт ячӗпе тӑракан колхозри телятница Лидия Николаевна Бабаева юлташ ҫамрӑк выльӑхсене пӗтӗмӗшпех упраса хӑварнӑ, унӑн пӑрувӗсем кашни талӑкрах 750-шар грамм хутшӑнса пынӑ. Республикӑра ялхуҫалӑхӗнчи тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри стахановецсен ҫарӗ ӳссе йышланса пырать.

Тӑван ҫӗршыва юратни, фашистла пусмӑрҫӑсене хаяррӑн курайманни, фронта пулӑшас тесе пӗтӗм вӑя, кирлӗ пулсан пурнӑҫа та пама хатӗр тӑни — ҫакӑн пек ырӑ туйӑмсемпе пурӑнаҫҫӗ Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем.

Пирӗн фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисемпе работницӑсем, хамӑрӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар валли хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем туса кӑларассине ӳстерессишӗн пурнӑҫа шеллемесӗр кӗрешнипе пӗрлех, пирӗн колхозсемпе МТС-сене те чылай пулӑшу параҫҫӗ.

Пӗтӗм халӑхӑн патриотла ҫекленевӗпе хавасланса, пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем танксен колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тума 66 миллион тенке яхӑн хыврӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен запасӗсенчен Хӗрлӗ Ҫар фондне 120 пин пӑт ытла тырӑ, нумай аш-какай, пахча-ҫимӗҫсем тата ытти продуктсем пачӗҫ.

Чӑваш республикинчи рабочисем, колхозниксемпе интеллигентсем Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем валли парнесем пухса 50 вагон ытла ярса пачӗҫ, ҫур миллиона яхӑн ӑшӑ тумтирсем пухса пачӗҫ. Фронтовиксен ҫемьисене пысӑк пулӑшу парса тӑраҫҫӗ, вунӑкунлӑх вӑхӑтӗнче кӑна фронтовиксен ҫемьисене 28 пин пӑт ытла тырӑ, 36 пин пӑт ытла ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем, 604 пин тенкӗ укҫан панӑ.

Пирӗн ҫӗршывра тылпа фронт пӗрлӗхлӗ. Хӗлле мухтавлӑ совет войскисем ӑнӑҫлӑн кӗрешсе пынӑ вӑхӑтра пирӗн совет тылӗ, фронта кулленех пулӑшса тӑракан тыл, пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар Эсир, Сталин юлташ, тӳрремӗнех ертсе пынипе, хӗллехи кампани вӑхӑтӗнче тӑшмана пысӑк поражени тӳстерчӗ, анчах ӑна ҫӗмӗрсе тӑкман-ха. Эпир, хаклӑ Иосиф Виссарионович, Эсир каланӑ сӑмахсене асра тытатпӑр: «Хӗрлӗ Ҫарӑн ирсӗр те усал тата халлӗхе вӑйлӑ тӑшмана хирӗҫ хаяррӑн кӗрешмелле пулать. Ҫак кӗрешӳ вӑхӑт, жертвӑсем ыйтать, хамӑрӑн вӑйсене тата хамӑрӑн мӗнпур майсене мобилизацилесе ӗҫе яма хушать».

Пирӗн республикӑна Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата иккӗмӗш премии пани пирӗн ҫине татах та пысӑк ӗҫсем хурать. Эпир лайӑх пӗлсе тӑратпӑр, хамӑрӑн майсене эпир пурне те мобилизацилеймен-ха. Пирӗн малашне татах та нумай ӗҫсем тумалла пулать. Социализмлӑ колхозлӑ строй тытса тӑракан резервсем халӗ кӑна пӗтӗм анлӑшӗпе ӗҫе кӗрсе пыма тытӑнаҫҫӗ.

Республикӑна Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне пани ҫинчен пӗлтерекен хыпар ӗҫҫыннисем хушшинче политикӑллӑ тата производствӑллӑ ҫекленӗвӗн ҫӗнӗ хумне пуҫарса ячӗ. Митингсемпе пухусенче тухса каласа, колхозниксем, фермӑсемпе МТС-сен работникӗсем ҫак ялава хӑйсен аллинче ҫирӗппӗн тытма пулса, татах та лайӑхрах ӗҫлеме, фронта татах та вӑйлӑнрах пулӑшса пыма пулса тупа тӑваҫҫӗ.

Пирӗн республикӑри колхозсем Ярославль облаҫӗнчи колхозниксен патриотла пуҫарӑвне хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Вӗсем оборона фончӗ валли тата гитлерла захватчиксенчен сиен курнӑ колхозсемпе колхозниксене пулӑшма планран ирттерсе тӗштырӑсем акма тата государство планӗнчен иртсе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетме пулса татӑклӑ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Республикӑра ҫураки пуҫланчӗ. Пирвайхи гектарсем ҫине тырӑ акнӑ ӗнтӗ. Партипе правительствӑн пысӑк наградипе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхоз работникӗсем уйхир ӗҫне йӗркеллӗн пуҫларӗҫ. Вӗсем ҫуракине кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа иртерессишӗн, 1943 ҫулхи тӗп задачӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн — пур культурӑсен тухӑҫлӑхне те хӑпартассишӗн, пӗрлешӳллӗ выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстерессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Республикӑри малта пыракан районсемпе колхозсем кӑҫалхи ҫулӑн пирвайхи кварталӗнче тӗрлӗ выльӑх-чӗрлӗх хисепне чылай ӳстерме пултарчӗҫ. Сӑмахран, Ишлей районӗнчи колхозсем, 1942 ҫулта республикӑри ӑмӑртура пирвайхи вырӑна йышӑннӑскерсем, кӑҫалхи иртнӗ виҫӗ уйӑх хушшинче майракаллӑ шултӑра выльӑх хисепне 5,8 процент, сыснасен хисепне 7,8 процент, сурӑхсемпе качакасен хисепне — 22 процент чухлӗ ӳстерме пултарчӗҫ. Ҫав районри нумай колхозсенче пӗр выльӑх та вилмен.

1943 ҫулта ялхуҫалӑхне аталантармалли плана тата колхозсемпе совхозсенчи выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстерсе унӑн тухӑҫлӑхне хӑпартмалли мерӑсем ҫинчен партипе правительство йышӑннине эпир фронт заказӗ пек хисеплетпӗр, отечественнӑй вӑрҫӑн хальхи татӑклӑ тапхӑрӗнчи хамӑр ӗҫӗн программи пек йышӑнатпӑр.

Ялхуҫалӑхӗнчи 1943 ҫулхи социализмлӑ ӑмӑртура эпир ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне, 1942 ҫултипе танлаштарсан, 10 процент таран ӳстерме, майракаллӑ шултӑра выльӑх хисепне 25 процент таран ӳстерме, сыснасен хисепне — 22 процент таран, сурӑхсемпе качакасен хисепне — 21 процент таран ӳстерме, кашни ӗнерен республикӑри колхозсенче вӑтамран 1.400 литр сӗт суса илме, кашни сурӑхран 2,5 килограмран кая мар ҫӑм илме, кашни 100 сурӑхран 115 путек, кашни сысна аминчен 12 ҫӑвӑр илме эпир ҫирӗппӗн йышӑнтӑмӑр.

1943 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ тӗлне ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ чӗнсе каланисем пире, колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницӑсене, агрономсемпе зоотехниксене, ҫуракине ӑнӑҫлӑн иртерме, ялхуҫалӑхӗн пур культурисене те пысӑк тухӑҫлӑхпа туса илме, выльӑх-чӗрлӗх хисепне ҫӗнӗрен ӳстерме, унӑн тухӑҫлӑхне хӑпартма чӗнеҫҫӗ.

Фронтпа ҫӗршыва апат-ҫимӗҫ ытларах, промышленноҫа — чӗртавар ытларах парассишӗн эпир хамӑр вӑя та, вӑхӑта та шеллемӗпӗр, тесе тупа тӑватпӑр Сире, тӑван Иосиф Виссарионович.

Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем Оборонӑн Государственный Комитечӗн Хӗрлӗ ялавне тата орденлӑ республика чысне сӳлте тытма пулаҫҫӗ.

Ывӑнма пӗлмесӗр, кашниех икӗ ҫыншӑн, виҫӗ ҫыншӑн ӗҫлеме пулатпӑр, тӑшмана тӗппипех ҫӗнтерес ӗҫе пӗтӗм вӑя хурӑпӑр, тесе шантарса калатпӑр Сире, Сталин юлташ.

Сире, Иосиф Виссарионович, пирӗн юратнӑ тӑван аттене тата учителе хамӑрӑн чаплӑ ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн нумай, нумай ҫулсем хушши пурӑнма пӗтӗм чӗререн ырӑ сывлӑх сунатпӑр.

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ хамӑр ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн, никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, чыслӑхӗшӗн паттӑррӑн ҫапӑҫакан Хӗрлӗ Ҫар сывӑ пултӑр!

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене ҫӗнтерессишӗн пыракан кӗрешӗвӗн организаторӗ тата хавхалантаракан ӗ — Ленин—Сталин партийӗ Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийӗ сывӑ пултӑр!

Сывӑ пултӑр аслӑ ҫулпуҫ тата полководец, Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ!

Чаплӑ пухӑвӑн президиумӗ

ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ҫапӑҫусенче хастарлӑхпа пултарулӑх катартнӑшӑн батарея командирне—**Н. М. Попов капитана** Отечественнӑй вӑрҫӑн 2-мӗш степеньлӗ орденӗпе наградӑланӑ. Вӑрҫӑччен Н. М. Попов Улатӑр хулинчи вӑтам шкулта вӗреннӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: пирӗн земляк — капитан Н. М. Попов.

ОБОРОНА ГЕКТАРӖСЕМ АКСА ХӐВАРАР!

Колхозлӑ хресченсем ылханлӑ тӑшманӑн мӗнле тӗллев тытнине лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем фронта пӗтӗм вӑйпа пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ, гитлерла вӑрӑ-хурахсене хӑвӑртрах ҫӗнтерме мӗн кирлине пурне те туса парассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче колхозниксемпе колхозницӑсем тӑван ҫӗршывшӑн нихӑҫан пулман хастарлӑхпа тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫара вӑйлӑнрах пулӑшас тесе ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ майсем шыраса тупаҫҫӗ. Халӗ ялсенче патриотла ҫӗнӗ юхӑм пуҫланса сарӑлса пырать. Эпир хамӑрӑн хаҫатра апрелӗн 24-мӗшӗнче Ярославль облаҫӗнчи Ярославски районри Горшиха ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем Пӗтӗм Союзри колхозниксемпе колхозницӑсене чӗнсе каланине пичетлесе кӑлартӑмӑр. Вӑл чӗнӳре Горшиха колхозникӗсем Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине вӑйлатас тӗлӗшпе хаклӑ та пысӑк ӗс пуҫарса яраҫҫӗ.

Вӗсем кӑҫалхи ҫураки вӑхӑтӗнче оборона фончӗ валли тата фашистла вӑрӑ-хурахсенчен ирӗке тухнӑ районсене пулӑшма планран иртерсе ҫирӗм гектар тӗштырӑ акса хӑварма обязательство илнӗ. Ҫав ҫирӗм гектара колхозниксем хӑйсен запасӗнчен пухса хатӗрленӗ вӑрлӑхпа акса хӑвараҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне фермӑсенче ӗҫлекен колхозниксем хӑйсен вӑрлӑхӗпе планран иртерсе пӗрер гектар ҫӗрулми тата тымарҫимӗҫсем лартса хӑварма, оборона фончӗ валли планран иртерсе сыснасемпе ӗнесем самӑртса пама йышӑннӑ. Горшиха артелӗн колхозникӗсем Пӗтӗм Союзри колхозниксемпе колхозницӑсене хӑйсен примерне йышӑнса илме чӗннӗ.

Иртнӗ ҫулта Краснодар крайӗнчи Крупская ячӗпе тӑракан колхоз пуҫарнипе пирӗн республикӑри колхозниксем оборона фончӗ валли пиншер гектар планран иртерсе акса хӑварчӗҫ, вӑл ҫӗр ҫинчен пухса илнӗ тырра Хӗрлӗ Ҫар фондне пачӗҫ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Цивильстрой» колхоз пуҫарнипе пӗлтӗр Хӗрлӗ Ҫар валли выльӑх-чӗрлӗх самӑртса парас ӗҫ анлӑн пулса пычӗ.

Хӗл вӑхӑтӗнче Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ захватчикӗсене пысӑк поражени тӳстерчӗ, чылай облаҫсемпе республикӑсене фашистла пусмӑрлӑхран хӑтарса ирӗке кӑларчӗ. Вӑл облаҫсемпе республикӑсенчи колхозсене нимӗҫсем ҫаратса пӗтернӗ, ҫуртйӗрсене ҫунтарса янӑ. Пирӗн чыслӑ тивӗҫлӗх — нимӗҫ фашисчӗсенчен сиен курнӑ хамӑрӑн тӑвансене хуҫалӑха ура ҫине тӑратма, вӗсен пурнӑҫне ҫӗнӗрен йӗркелесе яма пулӑшасси. Ҫак ӗҫре вара оборона гектарӗсем акса хӑварни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать, эпир оборона гектарӗсем мӗн чухлӗ нумайрах акса хӑварӑпӑр. пирӗн пулӑшу ҫавӑн чухлӗ вӑйларах пулӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Горшиха колхозникӗсен пуҫарӑвӗ совет хресченӗсен патриотизмне, пирӗн тылӑн ҫирӗплӗхне, колхоз стройӗн тӗреклӗхне кӑтартса паракан чи паха примерсенчен пӗри пулса тӑрать.

Ярославль облаҫӗнчи колхозниксен паха та ырӑ пуҫарӑвне пирӗн республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, пысӑк ҫекленӳпе кӗтсе илчӗҫ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем хӑйсен митингӗнче Ярославль облаҫӗнчи колхозниксем чӗнсе каланине сӳтсе-явса, оборона фончӗ валли планран иртерсе 10 гектар тӗштырӑсем, 1 гектар ҫӗрулми, 0,5 гектар купӑста акса хӑварма йышӑннӑ, харпӑрхӑй запасӗнчен вӑрлӑх пама пулнӑ. Кунсӑр пуҫне, вӗсем колхоз фермисенче планран иртерсе 50 сысна, 5 сурӑх, 2 ӗне ӳстерсе нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ колхозсене пама йышӑннӑ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ҫамрӑк вӑй» колхоз планран иртерсе 15 гектар, «Чуваш ЦИК» колхоз 8 гектар, «Ҫӗнӗ вӑй» колхоз 7 гектар акса хӑвараҫҫӗ. Район пӗтӗмпе оборона фончӗ валли планран иртерсе 850 гектар акса хӑварать. Ытти районсенче те ҫак ӗҫ анлӑн пулса пымалла.

Республикӑра ҫураки ӗҫӗсем кунсеренех сарӑлса пыраҫҫӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем умӗнче пысӑк задача тӑрать: ҫураки ӗҫӗсене лайӑх та хӑвӑрт туса иртермелле, ҫурхи культурӑсем акмалли плана тултармалла ҫеҫ мар, тата планран иртерсе оборона гектарӗсем те акса хӑвармалла, нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке тухнӑ тата ирӗке тухакан колхозсемпе колхозниксене пулӑшма пиншер тонна тырпул туса илмелле, пиншер пуҫ выльӑх-чӗрлӗх пӑхса ӳстермелле. Ҫакна тума пирӗн пур майсем те пур.

ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсен, партипе комсомолӑн ялсенчи пуҫламӗш организацисен, ялсовечӗсен Ярославль облаҫӗнчи колхозниксем чӗнсе каланине кашни колхоз, кашни колхозник патне ҫитермелле, Горшиха колхозникӗсен паха пуҫарӑвӗ ҫинчен вӗсене тӗплӗн ӑнлантарса памалла.

Ҫуракине ӑнӑҫлӑн туса иртерер, вӑйлӑ тырпул туса илер, ҫапла майпа фронта тата нимӗҫ пусмӑрӗнчен ирӗке тухнӑ тата ирӗке тухакан колхозсемпе колхозниксене пулӑшас ӗҫе вӑйлатар!

Кашни колхозрах планран иртерсе оборона гектарӗсем акса хӑварар, планран иртерсе выльӑх-чӗрлӗх ӳстерсе самӑртса парар!

Чӑваш республикинчи ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен тата партипе совет активӗн чаплӑ пухӑвӗ

Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне пани

Виҫӗмкун республикӑри ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен тата партипе совет активӗн чаплӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ. Вӑл пухӑва колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн Чӑваш республикине Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне панӑ ятпа пухнӑ.

Советсен ҫуртчӗн залӗнче республикӑри социализмлӑ ялхуҫалӑхӗнче тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ӗҫлекен чи лайӑх ҫынсем лараҫҫӗ. Кунта малта пыракан колхозсен председателӗсем, бригадирсем, дояркӑсемпе конюхсем, зоотехниксемпе агрономсем, парти райкомӗсен секретарӗсем, райисполкомсен председателӗсем, промышленноҫри малта пыракан предприятисен, колхозсемпе МТС-сене ялхуҫалӑх машинисем юсаса парса тата вӗсемшӗн запаслӑ пайсем туса парса пулӑшнӑскерсен, директорӗсем, вӑрҫӑн йывӑр кунӗсенче орденлӑ Чӑваш республикин малашнехи ӑнӑҫӑвӗсемшӗн хӑйсен вӑйне шеллемесӗр ӗҫлекен ҫынсем лараҫҫӗ.

Пухӑва ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ уҫать. Вӑл кӗске сӑмах калать.

— Паянхи кун, — тет Чарыков юлташ, — пирӗншӗн уйрӑмах савӑнӑҫлӑ кун, мӗншӗн тесен колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре тунӑ ситӗнӳсемшӗн пирӗн орденлӑ Чӑваш республикине паян Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне параҫҫӗ.

Ҫак сӑмахсене илтсен, пуху тӑвӑллӑн алӑ ҫупать.

— Анчах та ҫакна асра тытса тӑрас пулать, — тет Чарыков юлташ: — пирӗн тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса, мухтанса лармалла мар. Парти, совет тата ҫӗрӗҫ органӗсен ҫуракине анлӑн туса пыма, ҫурхи тырӑсене кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа акса хӑварма, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума, фронтпа ҫӗршыва тата ытларах тырӑ, какай, ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫсем туса пама пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшмалла. Оборонӑн Государственный Комитечӗн Хӗрлӗ ялавне тата пирӗн орденлӑ республикӑн чыслӑхне ҫӳлте тытса тӑрар! — тет юлашкинчен Чарыков юлташ.

Пуху президиумне ВКП(б) Обкомӗн секретарӗсене Чарыков, Белков, Ахазов юлташсене, Чӑваш АССР Совнаркомӗн председательне Матвеев юлташа, СССР Ҫӗрӗҫ халӑх комиссарӗн заместительне Чуенков юлташа, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне Андреева юлташа, ЦК ВКП(б) ҫумӗнчи Парти Контроль Комиссийӗн Чӑваш республикинчи Уполномоченнӑйне Серов юлташа, ВКП(б) Обкомӗн тата Чӑваш АССР правительствин членӗсене, Мари АССР-ӗн представителӗсене, ялхуҫалӑхӗнчи тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри чи лайӑх стахановецсене суйлаҫҫӗ.

Пухӑвӑн хисеплӗ президиумне тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйлаҫҫӗ.

СССР Ҫӗрӗҫ халӑх комиссарӗн заместителӗ Чуенков юлташ сӑмах илет.

Чуенков юлташ колхозниксемпе колхозницӑсене, специалистсене, ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур работниксене, парти, совет тата ҫӗрӗҫ органӗсен руководителӗсене чаплӑ награда илнипе — колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата Пӗтӗм Союзри иккӗмӗш премие илнипе саламлать.

Зала паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем хӑрӑссӑн утса пырса кӗреҫҫӗ. Малта — ялав ҫӗкленӗ боец. Пуставран ҫӗленӗ сарлака ялав ҫинче ылттӑнпа ҫырнӑ саспаллисем яр-уҫҫӑн курӑнса тӑраҫҫӗ.

Пурте вӑйлӑн алӑ ҫупаҫҫӗ. Оркестр вылять.

Трибуна ҫинче — полковник Макаров. Вӑл пухури ҫынсене чаплӑ награда илнипе саламлать.

— Ку наградӑна эсир отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн хӑрушӑ кунӗсенче, совет халӑхӗ пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен курайми тӑшманне хирӗҫ — юнлӑ гитлеризма хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑ кунӗсенче илтӗр. Эпӗ ҫакна шанса тӑратӑп: орденлӑ Чӑваш республикин ҫыннисем пирӗн юратнӑ социализмлӑ ҫӗршывӑн ырлӑхӗшӗн малашне тата вӑйларах, тата тимлӗнрех ӗҫлӗҫ, 1943 ҫулта тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвӗҫ.

Макаров юлташ Хӗрлӗ Ялава Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председательне Матвеев юлташа парать.

Матвеев юлташ, чӗркуҫланса ларса, ялава чуп тӑвать.

— Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисен ячӗпе, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн ячӗпе тата ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ячӗпе эпӗ ССР Союзӗн правительствине, ВКП(б) Центральнӑй Комитетне тата пирӗн ҫулпуҫа — Сталин юлташа ҫакӑн ҫинчен шантарса калатӑп, — тет Матвеев юлташ: — 1943 ҫулта ялхуҫалӑхӗнче тата лайӑхрах ӗҫлеме, ҫапла ӗҫлесе Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне хамӑр аларах хӑварма пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшӑпӑр.

Пухӑва Мари АССР-ӗнчен килнӗ делегаци руководителӗ Савин юлташ саламлать.

Чаплӑ пуху, вӑйлӑн хавхаланса, Верховный Главнокомандующине — Совет Союзӗн Маршалне Сталин юлташа саламлӑ ҫыру ячӗ.

Чаплӑ ларӑв хыҫҫӑн концерт пулчӗ.

ОБОРОНА ФОНДНЕ ХЫВМА

КАНАШ, апрелĕн 29-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**) Ярославль облаçĕнчи колхозниксен ырă пуçарăвне районри колхозниксемпе колхозницăсем чĕререн ырласа йышăнаççĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çав чĕнĕве сўтсе-явса, оборона фондне хывма çураки планĕнчен ирттерсе икĕ гектар тулă, икĕ гектар пăрçа, икĕ гектар сĕлĕ акма йышăннă тата вĕсем оборона фондне планран ирттерсе виçĕ центнер аш-какай парасçĕ, нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсем валли колхоз хăйĕн фермисенче планран ирттерсе 5 сурăх, 2 пăру ўстерет.

Оборона фондне хывма тата ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма районри колхозсем пурĕ паянхи куна 227 гектар çине тырă тата пахча-çимĕçсем планран ирттерсе акма пулнă.

В. Веселов.

* * *

ШАХАСАН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Анат Сурăмри «Красное Сормово» колхоз членĕсем çуракине ăнăçлăн туса ирттернĕ хыççăн оборона фондне хывма татах пĕр гектар пăрçа акма, виçĕ гектар çĕрулми лартма йышăннă. Оборона фондне хывмалли виçĕ гектар çĕрулмине колхозниксем хăйсен вăрлăхĕпе лартаççĕ. Ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пама «Красное Сормово» колхоз хăйĕн фермисенче 8 сурăх самăртса ўстерет.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТĔШТЫРĂСЕМ АКАС ĔÇ АПРЕЛĔН 25-МĔШĔ ТĔЛНĔ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Тĕштырăсене акнă процентпа
Калинински	31,5
Елчĕк	30,9
Вăрнар	27,3
Чкаловски	24,5
Йĕпреç	23,1
Первомайски	22,4
Комсомольски	19,8
Шăмăршă	16
Улатăр	14,5
Шăхасан	12,2
Çĕмĕрле	10,8
Шупашкар	9,9
Красноармейски	9,2
Етĕрне	7,7
Пăрачкав	7,1
Элĕк	6,5
Канаш	6
Кувакино	5,8
Сĕнтĕрвăрри	5,3
Хĕрлĕ Чутай	5
Куславкка	4,7
Тăвай	3,8
Ишлей	3,6
Советски	2,3
Октябрьски	1,9
Сĕнтĕр	1,7
Çĕрпў	1,5
Вармар	0,8
ЧАССР тăрăх	11,5

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Апрелĕн 27-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман. Крым сывăхĕнче пирĕн карап 2.000 тонна водоизмещениллĕ нимĕç транспортне путарнă.

* * *

Апрелĕн 26-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтернĕ, тăшманăн темиçе чугунçул эшелонне аркатса тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн миномет батарейине тата артиллерин 3 батарейине пусарнă. Красноболодько юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем тăшман блиндажĕсене вут тĕртнĕ. Çунакан блиндажсенчен нимĕç салтакĕсем чупса тухнă. Расщепкин тата Мерзляков пулеметчиксем пулеметсенчен персе нимĕçсен группине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ тата разведка туса пынă. Разведка отрячĕсем нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Совет авиацийĕ тăшман тылĕнчи чугунçул станцийĕсене тапăннă. Бомбăсем тўрремĕнех лекнипе темиçе чугунçул эшелонне аркатса тăкнă. Пирĕн истребительсем нимĕç бомбардировщикне персе ўкернĕ.

* * *

Кубань çинче совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ўкернĕ. Пирĕн бомбардировщиксем тăшман аэродромне тапăнса, çĕр çинче нимĕçсен 12 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пĕр чаçăн артиллеристĕсем тăшман позицийĕсем çине персе, нимĕçсен 6 орудине пĕтерсе тăкнă, 2 миномет батарейине пусарнă, тăшманăн 10 дзочĕпе блиндажне аркатса тăкнă.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ район центрне вăркăнса кĕнĕ те хаяр çапăçура нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. 60 гитлеровеца вĕлернĕ. Çав отрядри партизан-минерсен ушкăнĕ автомашинăсемпе мотоциклсем тиенĕ нимĕç эшелонне сирпĕнтернĕ. 30 вагонпа платформăллă пĕтĕм состав çунса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 239-мĕш полкăн 12-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Юзеф Шафарчик çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Францире Ла-Манш çыранне хуралланчĕ. Февралĕн юлашки кунĕсенче дивизие Российăна куçарчĕç. Тухса каяс умĕн пирĕн батальонран салтаксен пĕр ушкăнĕ тарчĕ. 12-мĕш ротăри Ватерман салтака, 9-мĕш ротăри Рымбальский салтака тата 10-мĕш ротăри Шабор салтака тытса, вĕлермелле приговор йышăннă. Приговора пурнăçа кĕртме рота командирĕ, обер-лейтенант Герке 6 çынна уйăрчĕ: мана, Номеса, Бардоляна, Ковальские, Нораса тата Шенколăна. Эпир пурте Ватермана пеме килĕшмерĕмĕр. Ку хутĕнче Герке никама та наказани паманнинчен пурте тĕлĕнчĕç. Ватермана вара рота командирĕн помощникĕ—лейтенант Фрайтаг персе пăрахрĕ. Российăри пирвайхи çапăçурах пирĕн батальонра 172 çын вилчĕ. Çак ялала пире питĕ хуйхăртрĕ. Салтаксем çапла калатчĕç: «Ĕçсем малашне те çаплах пырсан, пĕр уйăх хушшинчех пирĕн дивизирен нимĕн те юлмĕ, тетчĕç».

* * *

Аялларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Дебревски ялсоветĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç çынвĕлеренĕсем Дебревски ялсоветне кĕрекен ялсене пĕтĕмпех аркатса тăкрĕç. Гитлеровецсем пĕтĕм колхоз, пурлăхне тата колхозниксен хăйсен пурлăхне пĕтĕмпех çаратса тухрĕç. Нимĕçсем колхозниксен 190 килçуртне çунтарса ячĕç. Переходы, Петраново, Костино, Ново-Потапово тата Задвижки ялĕсенче пĕр çурт та юлман. Совет çыннисене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе хăйсен шуйттанла планне пурнăçа кĕртсе, фашистла палачсем çĕршер мирлĕ граждансене персе пăрахрĕç. Персе пăрахнисем шутĕнче Азар Панов, Григорий Моисеев, Андрей Ефремов тата ытти чумай колхозниксем те пур. Гитлеровецсем пур майсемпе те хресченсенчен тискеррĕн мăшкăлларĕç. Вĕсем 76 çулхи Прасковья Панова колхозницăна пĕтĕм халăх умĕнче çаптарчĕç, персе пăрахассипе хăратса, ăна темиçе хут та стена çумне тăратрĕç. Каялла чакас умĕн нимĕçсем нумай çынна ирĕксĕрлесе Германие каторгăна хăваласа кайрĕç. Нимĕç хурахĕсен тискер ĕçĕсене эпир нихăçан та манас çук. Кашни фашистла çынвĕлеренĕн эпир тавăрнине пула нумай макăрма лекĕ-ха». Акт çине çаксем алă пуснă: капитан Сызранцев, Дебровски ялсоветне кĕрекен граждансем—Крылова, Панова, Кондратьева, Панова, Орлова, Моисеева тата ыттисем те.

Апрелĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Апрелĕн 28-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 27-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 40 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ, тăшман артиллерийĕн 4 батарейине пусарнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем артиллерирен персе тăнă тата разведка туса пынă. Кавицкий юлташ командир пулса ертсе пыракан танксен подразделенийĕ юлашки çапăçусенче нимĕçсен 11 орудине, 18 минометне, 17 пулеметне тата тăшманăн 4 танкне пĕтерсе тăкнă.

Пĕр кун хушшинче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе ўкернĕ. Кунсăр пуçне, тăшманăн 8 самолетне пирĕн зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн чаçсем пăшалсемпе пулеметсенчен тата артиллерипе минометсенчен персе тăнипе нимĕçсен 9 дзотне, 4 блиндажне, артиллери батарейине тата гитлеровецсен пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра нимĕç автоматчикĕсем çапăçса разведка тума хăтланнă. Пирĕн малти подразделенисем пулеметсенчен пеме пуçланă та гитлеровецсене каялла чакарнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 45 вилли выртса юлнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн разведка тăвакан отрядсем нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Советсен бомбардировочнăй авиацийĕ, тăшман аэродромне тапăнса, нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 2 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллеристсем тăшман позицийĕ çине персе тăрса 16 дзота, 9 землянкăна тата 3 наблюдательнăй пункта аркатса тăкнă. Совет снайперĕсем икĕ кун хушшинче 150 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра нимĕç автоматчикĕсен пысăк группи кун каçиччен темиçе хут та пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Лейтенант Васильков тата кĕçĕн лейтенант Петрухин командир пулса ертсе пыракан подразделенисен боецĕсем, тăшман атакисене сире-сире пăрахса, 50 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра кĕçĕн лейтенант Коканцев командир пулса ертсе пыракан разведчиксем тăшман траншейисене кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пынă çапăçусенче 20 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Совет боецĕсем, çынсене тыткăна илсе тата документсем тытса илсе, хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Совет партизанĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене вăйлăн пырапыра çапаççĕ. Вĕсем тăшманăн войскăсемпе техника турттаракан эшелонĕсене ўпĕнтерсе яраççĕ, кĕперĕсене сирпĕнтереççĕ, çыхăнăвĕсене татаççĕ, гарнизонĕсене аркатаççĕ, тăшманăн çыннисене пĕтереççĕ. Нимĕç командованийĕ партизансен юхăмне пĕтерсе тăкма темиçе хут та хăтланнă. Партизансене хирĕç гитлеровецсем пысăк соединенисем янă, вăл соединенисемпе пĕрле танксем, артиллери, огнеметсем, самолетсем янă. Анчах та карательсен партизансене хирĕç тăвакан похочĕсем пĕрин хыççăн тепри путланса ларнă.

Партизансене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте темиçе хут поражени тўснĕ хыççăн нимĕçсем хăйсен чи юратнă меслечĕпе—провокаципе усă курма шутланă. Нумаях пулмасть гитлеровецсем листовка çырса ăна Украинăпа Белоруссин хăшпĕр районĕсенче пăрахса тухнă. Çав листовкăра совет çар влаçĕсен ячĕпе партизансене уйрăмăн тата пĕчĕк отрядсемпе кĕрешме пăрахса, шултăра отрядсем туса, Хĕрлĕ Çарăн яланхи чаçĕсемпе пĕрле кĕрешме хушакан приказа кĕтме хушнă. Вăл приказ, гитлерла фальшивкăра, «тырпула пухса амбарсене хурсан тата шывшурсем пăрпа витĕнсен» тухать, тенĕ.

Çак провокацин тĕллевĕ паллах. Çуркуннехипе çуллахи татăклă çапăçусем умĕн нимĕçсем партизансен кĕрешĕвне чарса лартасшăн. Гитлеровецсем партизансене кĕрешме пăрахтарасшăн, кĕтсе лармалла тăвасшăн.

Анчах та совет партизанĕсем хушшинче нимĕç суеçĕсен çак провокацине ĕненекен айвансем тупăнман. Фальшивка авторĕ кам пулнине партизансем часах тавçăрса илнĕ. Нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенче совет патриочĕсем гитлеровецсене тивĕçлĕ ответ панă. Украина, Белоруссии тата ытти районсенчи партизансем гитлерла çарăн тылĕсене тата вăйлăрах аркатса пыраççĕ. Гитлеровецсен провокацийĕ çине ответлесе, совет партизанĕсемпе партизнкисем тата хастарлăрах чугунçулсене аркатĕç, кĕперсене сирпĕнтерĕç, çыхăнăва татĕç тата нимĕç ирсĕрĕсене пĕр чарăнмасăр пĕтерсе пырĕç.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

1943 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ—СССР Верховный Совет депутачĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пачĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешўре командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çав ĕçре хастарлăхпа пултарулăх кăтартнăшăн икĕ хут наградăланă старши лейтенант И. А. Комаренко юлташ Хĕрлĕ Ялав орденĕ илчĕ, кĕçĕн лейтенант М. А. Александров юлташ (Элĕк районĕнчен) Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, красноармеец А. И. Чечнев юлташ (Шупашкар хулинчен) „За боевые заслуги" медаль илчĕ. Правительствăн заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн И. С. Ластухин юлташ (Шупашкар районĕнчен) „За трудовое отличие" медаль илчĕ.

Унтан З. А. Андреева юлташ республикăри çар комиссариачĕсенче ĕçлекен работниксене тата Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа наградăланисене, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ. Грамотăсене çаксем илчĕç: республикăн çар комиссарĕ полковник А. А. Алексеев, политотдел начальникĕ—майор Н. Т. Тютиков, Канаш хулипе районĕн çар комиссарĕ М. С. Макаров юлташ, Етĕрне районĕн çар комиссарĕ В. Н. Дворников юлташ, Шăхасан районĕн çар комиссарĕ И. А. Тямушкин юлташ, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн çар отделăн заведующийĕ Н. И. Чурбанов юлташ, Улатăр хула комитечĕн çар отделĕн заведующийĕ М. А. Ананьин юлташ, партин Етĕрне райкомĕн çар отделĕн заведующийĕ М. Н. Князьков юлташ, Чкаловски райкомĕн çар отделĕн заведующийĕ Д. П. Кирпичев юлташ, Чăваш республикинчи çар комиссарĕсен тата ВКП(б) райкомĕсен работникĕсем—Н. Н. Анисимов, В. П. Баусова, И. Г. Ежов, Г. О. Иванов, Г. З. Коробков, Б. Н. Михайлов, Г. А. Михайлов, И. П. Петров, И. И. Печалин, А. Н. Соколов, А. Ф. Шаргаев, А. С. Шамшуров юлташсем тата Чăваш АССР Совнаркомĕн работникĕ И. А. Смирнов юлташ илчĕç.

Область çар комиссариачĕн инструкторĕ Петров юлташ наградă илнисен ячĕпе сăмах тухса каларĕ.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисене пурне те наградă илнипе саламларĕ тата малашне те ĕçре ăнăçусем туса пыма сунчĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

17. Герой

Вăл ларнă лăпкă çĕр пўртре,
Кĕскен хăй шухăшне тĕрленĕ.
Пĕр чарăнмасăр, инçетре
Хаяр вăрçă сасси кĕрленĕ.

Каçхи хĕрўллĕ ĕçсене
Дневникĕнче вăл пĕтĕçтерне.
Çапла хăйне тĕрĕслеме
Пулни-иртнисене тĕпчене.

Кунта хăйне вăл хĕрхенмен,
Кăлтăк пулсан, хытах ятланă.
Çапăçура чи кирлине
Чĕрипеле çунса шыранă.

Çурма-ĕçе вăл юратман;
Ăçта, мĕскер тумасăр юлнă,
Дневникĕнче вăл пытарман,
Çавна ыран тума вăл пулнă.

Тăват мотор мĕн панине
Йăлтах хаярлăха кĕртесчĕ.
Тăшманăн çĕршĕннĕ пуçне
Ялан Гастелло пек хĕртесчĕ.

Орлов черетлĕ каç валли
Хăйне задани хатĕрленĕ,
Кĕçĕрхи каç аркатмалли
Чи йывăр обьекта тĕлленĕ.

Çапла паян та йĕркерен
Хăй шухăшне çырса хурсассăн,
Вăл тухрĕ лăпкă çĕр пўртрен,
Вăл пулчĕ тĕнчене курасшăн

Çĕрле—текех çапăçура, —
Тулга—вăрман, çанталăк ырă.

Хĕрсех халь ĕнтĕ колхозра
Тăван ялйыш вырать пуль тырă.

Анчах кунта пĕр вĕçĕмрен
Кĕрлет хаяр та юнлă вăрçă.
Кунта çак чунсăр вилĕмрен
Çăлăнаймасть чи çирĕп хурçă.

Этем кăна тусет иккен, —
Шутлама ĕлкĕрчĕ çапла çеç;
Унтан курать вăл: пур енчен
Ун патнелле çынсем чупаççĕ.

Мăкăрланать тусан анчах, —
Мĕн пулнă-ши, мĕскер ăнманĕ?
Субординацие мансах
Чупать майорĕ, капитанĕ.

Малта ав Сушин капитан,
Унтан иртет Милостивенко.
Орлов пĕр нимĕн ăнланман,
Мĕн пулнине пачах пĕлмен-ха.

Тен, пулнă пуль пĕр-пĕр инкек?!.
Анчах çынсем хавас кулаççĕ.
Хăватлă тинĕс хумĕ пек,
Ăна тытаççĕ те йăтаççĕ.

Янрать уçланкăра урра, —
Фронтри юлташлăх пит хĕрўллĕ.
— Мухтав — çунатлă паттăра!
Мухтав сана, çĕршыв геройĕ!

Ăна ывтаççĕ хытăрах,
Çўлтен çўле туссем çĕклеççĕ.
Пĕр нимĕнле болтанкăра
Хальччен кун чухлĕ силлеменччĕ.

Çуралчĕ митинг ăнсăртран:
—Кашни Орлов пек паттăр пултăр!
Çак вăрмантах пĕр-ик кунтан
Ăна параççĕ Ылттăн Çăлтăр.

Çав парнене алла парсан,
Фронт çар совечĕн членĕ ыйтрĕ:
—Мĕскер каласшăн, капитан?—
Ытакласа ăна вăл тытрĕ.

Орлов ача пек пăлханса,
Кĕскен:—Ан тăвăр, терĕ, айăп,
Сăмаххăм тухас çук ансат
Калассине ĕçпе эп калăп.

Фронтра çапла кăна сăмах, —
Вăхăт ахаль сая ан кайтăр.
Тăшман çине, каç пулсанах,
Орлов вĕçсе тухмашкăн хатĕр.

Ăна чĕнет тăван çĕршыв
Ăна çĕклет герой çуначĕ.
Йĕри-тавра çунăк шăрши,
Ку пирĕн хуласем çунаççĕ.

Тăван çĕршыв аманнă чух
Ăçтан-ха чĕресем лăпланĕç?
Тăшман пĕтмесĕр канăç çук,
Çапăçура кăна халь канăç.

Çак шухăшпа вăл кĕçĕрех
Çапăçăва кайма шутларĕ.
Кĕçĕр вăл çапĕ вирлĕрех,
Герой ятне тўрре кăларĕ.

Чăн та, паян городокра
Ун ячĕпе—хаваслă вечер.
Пулма лекмест пуль концертра,
Туссем каçарччăр, ан кўренччĕр

Ан пăшăрханччăр артистсем, —
— Çапăçăва!—тет Ылттăн Çăлтăр.
— Тен çитĕп те кайса килсен,
Ĕçĕ кăна йĕркеллĕ пултăр.

Яланхинчен вăл хăвăртрах
Моторсене тĕрĕслеттерчĕ.
Çак самантра городокра
Пуçтарăннă уяв концерчĕ.

Клубра, чечек ытамĕнче
Ун паянхи портречĕ ларнă.
Фронтри поэт герой çинчен
Хĕрўллĕ сăввине вуланă.

Унтан уяв сцени çине
Артистка тухнă кăшт именнĕн.
Вăл, вырăс халăх юррине
Ун ячĕпе юрлатăп, тенĕ.

Анчах пĕр сасă халăхран:
—Орлов ăçта-ха?—тесе ыйтнă
Мотор сасси çак самантра
Илтĕнсе кайнă питĕ хыттăн.

Мĕнпур хăватлă моторсен
Мĕнпур заслонкине вăл уçнă.
Орлов сатуррăн кĕрлесе
Клуб урлă аслати пек куçнă.

Артисткăн витĕмлĕ юрри
Самантлăх кĕрлевре çухалчĕ.
Ун çепĕç туйăмлă чĕри
Вĕри хумханупа выляччĕ.

— Орлов ку,—терĕç летчиксем,
Хавассăн алă çупса ячĕç.
...Кун пек тĕлĕнмелле ĕçсем
Пирĕн патра кăна пулаççĕ.

Вара артистка малалла
Хĕрўллĕнрех юрла пуçларĕ.
Çав юрă пĕтĕм фронтпала
Инçе-инçе янраса карĕ.

Çав юрăра тулса тăрать
Тăван Российăн вăйхăвачĕ
Çав юрă пирĕн паттăра
Нихçан сўнми хастарлăх пачĕ.

Çав каç Орлов фашистсене
Мĕнпур хаярлăхпа çунтарчĕ.
Çав каç Орлов герой ятне
Татах, татах тўрре кăларчĕ.

Унтан киле вăл таврăнать.
—Ĕç пулчĕ, тет, питех те лайăх!
Чăваш ачи, мухтав сана!
Мухтав, хăватлă ăмăрткайăк!

(Малалли пулать).

Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетлеме пуçланă.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем пур фронтсенче те малалла куçса пынă.

Англин пĕрремĕш армийĕн участокĕнче ĕнер Меджез-Эль-Баб секторĕнче кунĕпех хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсем темиçе хут та контратака туса пăхнă.

Пон-Дю-Фас районĕнче Франци чаçĕсем виçĕ кун хушшинче çўреме йывăр районсенче 24 километр малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ Тунисри тата Сардини утравĕнчи çар обˮекчĕсене, тăшманăн транспорт колоннисене тата войскисене пĕрмаях хаяррăн тапăннă.

Çыран оборонин çăмăл карапĕсем юлашки икĕ çĕр хушшинче Бизерта гаванĕнче тата Тунис заливĕнче Германин икĕ танкерне тата пысăк мар пĕр суту-илў карапне путарнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Меджез-Эль-Бабран хĕвелтухăçнерехре хаяррăн кĕрешсе пыракан Англи войскисем тăшманăн оборонăллă тĕп позицийĕсене çĕнĕ хăрушлăх умне тăратнă. Бронетанковăй чаçсем Пон-Дю-Фасран Туниса каякан паллă çул патне чылай çывхарнă, Франци войскисем Пон-Дю-Фасран 4—5 миляра тăракан высотана йышăнса илнĕ.

Вăтам секторта Англи пехоти, танксем пулăшнипе усă курса, Себкрет-Джабер кўлли патнелле çывхарнă. Халĕ вăл Пон-Дю-Фас—Тунис хушшинчи тĕп çултан 6 миля хĕвеланăçнерехре тăрать.

Танксен çапăçăвĕнче тăшман ĕнер тата 20 танк çухатнă, вăл шутра 5 йывăр танк.

Джебель-Асмера сăртне тăшмантан тасатса тата 260 çын тыткăна илсе, англичансем тата 4 миля малалла куçнă, Меджез-Эль-Баб—Тебурба çулĕ патне çитнĕ.

Чи çурçĕрти пайра американецсен малта пыракан отрячĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн, Джефна ятлă сăрт хушшинчи çул çине тухнă.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци войскисем Пон-Дю-Фас тулашне ситнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем тăшман шывне минăсем лартса тухнă.

Союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем ĕнер Кăнтăр Италири Бари аэродромне çĕнĕрен пырса тапăннă. Темиçе çĕрте вăйлă пушарсем тухнă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет; апрелĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Дуисбурга тапăннă вăхăтра хула çине минутăра 30 тонна ытла бомба пăрахнă. Хула çине пĕтĕмпе пĕлтĕрхи май уйăхĕнче 1000 самолет вĕçсе пырса Кельн çине мĕн чухлĕ бомба пăрахнă, çавăн чухлех бомбăсем пăрахнă.

РУМЫНИРИ ГИТЛЕР ЛАКЕЙĔСЕМ ШИКЛЕНЕÇÇĔ

СТАМБУЛ, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем çак кунсенче Бухарестри çар коменданчĕн приказне пичетлесе кăларнă. Вăл приказ çĕршывра вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем тата нимĕçсемпе вĕсен Румынири лакейĕсене курайманни ўссех пынине пула Румынире пуç пулса тăракан ушкăн шикленнине уççăн кăтартса парать.

Приказăн темиçе пункчĕ правительствăна хирĕçле пыракан агитацие пусарса хума тата халăха политикăллă кирек епле ыйтусене те сўтсе-явма чарма тăрăшаççĕ. Приказăн 10-мĕш параграфĕнче ресторансен, кафесен тата ытти заведенисен хуçисене „хирĕçле шухăшсем саракан тата пропаганда тăвакан çынсем çинчен çийĕнчех влаçсене пĕлтерме" хушнă. 12-мĕшпе 13-мĕш параграфсенче çапла каланă: „Арми çинчен, çар операцийĕсем çинчен, тулашри тата шалти политикăллă лару-тăру çинчен кирек-епле сўтсе-явма та юрамасть, арми çинчен, çар операцийĕсем çинчен суйăне те, чăннине те калама юрамасть.

Германипе Италие тата Антонеску ушкăнне курайманни ўссе пыни приказăн 19-мĕш, 20-мĕш, 22-мĕш параграфĕсенчен курăнать. Вĕсенче çапла каланă: „Румынипе союзлă государствăсене тишкерме тата вĕсене хирĕçле каласма, армие ертсе пыракансене, правительствăна тата вăл государствăсен командованине хирĕçле каласма юрамасть. Армирен йĕрĕннине палăртма, çамрăксене закон хушакан çар тивĕçлĕхне пурнăçлассинчен пăрăнма чĕнме юрамасть", тенĕ.

Саботажпа диверси ĕçĕсем нумай пулнине кура приказăн уйрăм параграфĕ влаçсем ирĕк памасăр никам та казармăсене, вокзалсене, портсене, поездсем çине, склад сене" тата хушман ытти вырăнсене „кĕме çеç мар, вĕсен çывăхĕнче пулма та" чарать.

Юлашкинчен приказра ăна пăсакансене пысăк наказани парасси çинчен каланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

Шупашкарти кинотеатрта апрелĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа кашни кунах.

„Леди Гамильтон"

ятлă сасăллă, художествăллă фильм кăтартаççĕ.

Фильма Александр Корда тунă.
Фильмра 1940 çулхи Англие кăтартнă.
Сеанссен пуçламĕшĕ: 10, 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.
Билетсене малтанах сутаççĕ.

Шупашкарти Мелькомбинат граждансене çакăн çинчен пĕлтерет: Шупашкарти механически 1-мĕш номерлĕ арман кирек мĕн чухлĕ те тырă авăртма йышăнать.
Адрес: Шупашкар, Урицкий урамĕ, 15 Мелькомбинат.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРА çакăн пек работниксем кирлĕ: администратор, бухгалтер, сторожсем, дворник билетерсем, уборщицăсем, художник, паровой отоплени механикĕ, водопроводчик, полотер-вахтер.
4—1

Приволжски леспромхозăн Кувшинкăри лесопунктне бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Урицкий урамĕ, 36.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1. Управления полиграф. промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.